26-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1943 ДЕКАБРЬ 14 ЫТЛАРИКУН 246(6483) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Совет Информаци Бюровӗнчен

ДЕКАБРӖН 11-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Декабрӗн 11-мӗшӗнче КИРОВОГРАД енче пирӗн ҫарсем тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе, наступлени туса пынӑ. Кировоград облаҫӗнчи НОВОГОРОДКА ятлӑ район центрне тата ЦВЕТНА, СОСНОВКА, СМЕЛЬГОРОД, ЯСИНОВЫЙ, ФЕДВАРЬ, СПАС-МАЖЕРОВКА, ГЛУБОКАЯ БАЛКА, НОВО-МИХАЙЛОВКА, СОТНИКСКИЙ, ВЕРБЛЮЖКА ятлӑ яласене тата САХАРНАЯ ятлӑ чугун ҫул станцине йышӑнса илнӗ.

МАЛИН хулинчен кӑнтӑртарахри тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехри районра пирӗн ҫарсем тӑшман пехотипе танкӗсене хирӗҫ ӑнӑҫлӑн ҫапӑҫнӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведка тата артиллерипе минометсенчен персе тӑнӑ.

Декабрӗн 10-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 136 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ, вӗсенчен 103-шне МАЛИН хулинчен кӑнтӑртарахри районра пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 14 самолетне персе ӳкернӗ.

ДЕКАБРӖН 12-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Декабрӗн 12-мӗшӗнче КИРОВОГРАД енче пирӗн ҫарсем малалла талпӑнса пынӑ. ЗЕЛЕНЫЙ ГАЙ, БОГДАНОВКА, МАТРЕНОВКА, 1-МӖШ ДОНИНО-КАМЕНКА, НОВАЯ АНДРЕЕВКА, НОВО-НИКОЛАЕВКА, МАЗУРКОВКА ятлӑ яласене тытса илнӗ.

КРЕМЕНЧУГ хулинчен хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе, Кировоград облаҫӗнчи район центрне — ЧИГИРИН хулана илнӗ, ҫавӑн пекех тата БУЖИН, ТЮНЬКИ, ГАЛАГАНОВКА, ЧЕРНЕЧА, ХЕРСОНКА ятлӑ яласене йышӑнса илнӗ.

МАЛИН хулинчен кӑнтӑртарахри тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехри районра пирӗн ҫарсем тӑшман пехотипе тата танкӗсемпе ҫапӑҫнӑ, тӑшмана темиҫе ялтан хӑваласа кӑларнӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведка тунӑ тата артиллерипе минометсенчен персе тӑнӑ.

Декабрӗн 11-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 66 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 37 самолетне персе ӳкернӗ.

ЗНАМЕНКА хулипе чугун ҫул узелне йышӑнса илнӗ чухне пирӗн ҫарсем ҫакӑн пек трофейӑсем тытса илнӗ: танксемпе бронемашинӑсем — 94, тупӑсем — 152, пулеметсем — 373, минометсем — 120, бронетранспортерсем — 52, автомашинӑсем — 684, ҫар хатӗрӗсем тиенӗ лавсем — 453, мотоциклсемпе велосипедсем — 420, боеприпас, горючи тата апат-ҫимӗс склачӗсем — 22.

☆ ☆ ☆

Кировоград енче пирӗн ҫарсем наступлени туса пынӑ, темиҫе ял тытса илнӗ. Пӗр ял районӗнче нимӗҫсем танксемпе пехотӑн шултӑра вӑйӗсене пухса тӑратнӑ, вайлӑн хирӗҫ тӑнӑ. Пӗр стрелковӑй чаҫӑн боецӗсем тӑшмана флангран пырса ҫапнӑ та танкистсемпе пӗрле пӗр ялӑн урамӗсене вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ. Совет ҫарӗсем пырса ҫапнине чӑтаймасӑр, тӑшман пӗр йӗркесӗр каялла чакнӑ, хӗҫпӑшалсемпе боеприпассем нумай пӑрахса хӑварнӑ. Тепӗр участокра пӗр соединени чаҫӗсем малалла тапӑнса пынӑ. Нимӗҫсен 800 салтакӗпе офицерне ытла вӗлерсе пӗтернӗ, 25 танк, «Фердинанд» йышши хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 2 тупӑ тата 5 транспортер персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янӑ. Трофейӑсем тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Кременчуг хулинчен хӗвеланӑҫнерехре пӗр соединени чаҫӗсем ҫапӑҫса малалла куҫнӑ. Чигирин хулин кӑнтӑр тата хӗвелтухӑҫ енчи хӗррине пырса кӗнӗ. Ҫав вӑхӑтрах пирӗн отрядсем ҫав хула патне кӑнтӑр-хӗвеланӑҫ енчен пыракан ҫулсене татнӑ. Тӑшмана ҫавӑрса илме пуҫланӑ. Нимӗҫсем темиҫе хут контратака тунӑ, анчах та вӗсем хӑйсен позицийӗсене каялла тытса илме хӑтланни ӑнӑҫман. Совет чаҫӗсем, тӑшманӑн контратакисене сирсе ярса, Чигирин хулине вӑркӑнса кӗнӗ те унти нимӗҫ гарнизонне пӗтерсе тӑкнӑ. Тӑшман пысӑк ҫухату тӳснӗ. Пирӗн боецсем тупӑсем нумай тытса илнӗ тата боеприпассемпе ҫар пурлӑхӗн темиҫе складне тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Малин хулинчен кӑнтӑртарахра тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем тӑшман пехотипе тата танкӗсемпе ҫапӑҫнӑ. Пӗр участокра нимӗҫсем совет чаҫӗсен оборона линийӗсене татма темиҫе хут та хӑтланса пӑхнӑ, анчах та вӗсене каялла сирсе янӑ. Пирӗн позицисем умӗнче тӑшманӑн 600 вилли ытла выртса юлнӑ тата нимӗҫсен ҫунса кайнӑ 7 танкӗ ларса юлнӑ. Тепӗр участокра пӗр соединени боецӗсем хаяррӑн ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн гитлеровецсене темиҫе ялтан хӑваласа кӑларнӑ. Ҫав ялсемшӗн ҫапӑҫнӑ чухне нимӗҫсен 1000 салтакӗпе офицерне ҫити вӗлерсе пӗтернӗ, 28 танкне, хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 4 тупине тата 40 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Полесье облаҫӗнчи районсенчен пӗринче кӗрешекен партизансен отрячӗ декабрӗн 1-мӗшӗнче нимӗҫсен фронталла каякан автоколоннине тапӑннӑ. Партизансем 80 гитлеровеца вӗлернӗ, гранатӑсем ывӑтса, пӗр бронемашинӑна, пӗр ҫӑмӑл автомашинӑна тата 12 грузовой автомашинӑна сирпӗнтерсе янӑ.

* * *

Нимӗҫсен 320-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 585-мӗш полкран Хӗрлӗ Ҫар енне куҫнӑ салтак Роберт Н. ҫапла каласа панӑ: «Пирӗн дивизи Ҫурҫӗр Донецран пуҫласа Днепр патне ҫитиччен ҫапӑҫса чакса пычӗ. Ҫав вӑрӑм ҫул нимӗҫ салтакӗсен виллисемпе тулнӑ. Дивизи Днепр патне ҫитнӗ чухне унӑн ротисенче 5—10-шар ҫын ҫеҫ тӑрса юлнӑччӗ. Ҫакӑн пек аркатса тӑкнӑ хыҫҫӑн чӗрӗ юлнӑ салтаксем Днепр шывӗ хыҫӗнче ҫапӑх та канма пулӗ-ха, тесе шанса тӑратчӗҫ. Анчах ҫапла шухӑшланисен питӗ хытӑ ӳкӗнмелле пулчӗ. Днепр шывӗн сылтӑм енче пирӗншӗн чи хӑрушӑ вӑхӑт килсе ҫитрӗ. Ротӑсене ҫӗнӗрен ҫынсем хушса пачӗҫ те темиҫе кун иртсен ҫапӑҫӑва кӗртсе ячӗҫ. Пирӗн полка 6-мӗш танковӑй дивизин танкӗсем пулӑшса пычӗҫ. Анчах вырӑссем пӗр 10 минут хушшинчех 7 танка персе ҫӗмӗрчӗҫ, ытти танксем вара тарса пытанчӗҫ. Пирӗн ротӑри салтаксем каялла чупса кайрӗҫ, вырӑссем вӗсене хыҫранах хӑваласа пычӗҫ. Кӳршӗри подразделенисем те чупма пуҫларӗҫ. Пурте пӗрле хутшӑнса кайрӗҫ. Пирӗн полка ҫынсем нумаях пулмасть ҫеҫ хушса панӑччӗ, анчах вӑл ҫак ҫапӑҫура хӑйӗн ҫыннисен 70 процентне ҫухатрӗ. Мӗн ҫапӑҫнипе ҫитӗ, терӗм те, меллӗ вӑхӑт килсе ҫитсенех, эпӗ вырӑссем патне куҫрӑм».

* * *

Аялараx нимӗҫсен фашистла ирсӗрӗсем Полтава облаҫӗнчи Градижск ялӗнче тунӑ тискер ӗҫсем ҫинчен ҫырнӑ акта пичетлетпӗр: «Нимӗҫ захватчикӗсем Градижск ялне тытса илнӗ хыҫҫӑн малтанхи кунсенче колхозниксен тата совет служащийӗсен пысӑк ушкӑнне персе вӗлерчӗҫ. Фашистла пуҫкасакансем райҫӗрӗҫ пайӗн заведующине Стрижака, учительсене Тарана тата Мошеле, МТС директорне Харченкӑна, УССР Верховный Совечӗн депутатне Антонина Галагана, лесника Самойленкӑна, аптека заведующине Медниковӑна тата ыттисене те персе вӗлерчӗҫ. Ҫавӑнтан вара ҫынсене пусмӑрласси, арестлесси, вӗлересси пӗр кунлӑха та чарӑнса тӑмарӗ. Гитлеровецсем хӑйсем чакас умӗн уйрӑмах иртӗнсе кайрӗҫ. Чапаев ячӗпе тӑракан колхозӑн председательне Григорий Погребнякӑ вӗлерес умӗн нимӗҫсем унӑн ҫамки ҫинче тата хырӑмӗ ҫинче пилӗк кӗтеслӗ ҫӑлтӑрсем касса кӑларчӗҫ. Хӗрлӗ Ҫар пыра-пыра ҫапнипе каялла чакнӑ чухне нимӗҫсем пурӑнмалли 1.900 ҫурта ҫунтарса ячӗҫ. Фашистла ирсӗрсем шкула, больницӑна, поликлиникӑна, обществӑллӑ мӗнпур ҫуртсене, электростанцие, ҫу заводне тата мӗнпур чиркӳсене пӗтерсе тӑкрӗҫ. Гитлеровецсен ялсенче уйӑрнӑ командисем вылькӑхчӗрлӗхсене вӗлерсе, виллисене пусӑсене (ҫӑлсене) пӑрахса ҫӳрерӗҫ. Фашистла тискер кайӑксем пирӗн ялта тунӑ тискер ӗҫсене пурне те пӗр актра ҫырса кӑтартма нимпе май та ҫук. Ҫав тискер ӗҫсемшӗн пуринчен ытла ҫаксем айӑплӑ тесе шутлатпӑр: вӑхӑтлӑха комендант пулнӑ Шварц, комендант Глимм, унӑн помощникӗ Рейхенбах тата фашистла ытти ирсӗрсем те».

Акт ҫине ҫаксем алӑ пуснӑ: хирург А. Спицин, больница заведующийӗ П. Чернешенко, санитари врачӗ А. Борьдюх, протоиерей Е. Торский, Градижск ялӗнчи ҫынсем — Н. Остроушко, А. Крупко, Н. Якуба, А. Геярены, И. Пролода тата ыттисем те.

НИМӖҪСЕН ФАШИСТЛА ЗАХВАТЧИКӖСЕМ ХАРЬКОВ ХУЛИПЕ ОБЛАҪӖНЧЕ ТИСКЕР ӖҪСЕМ ТУНИ ҪИНЧЕН

Нимӗҫсен фашистла захватчикӗсем тата вӗсемпе пӗр каварлисем тунӑ тискер ӗҫсене тата вӗсем Совет Союзӗнчи граждансене, колхозсене, общество организацийӗсене, государство предприятийӗсемпе учрежденийӗсене кӳнӗ сисне тӗпчесе пӗлме тунӑ Чрезвычайнӑй Государственнӑй Комисси

ПӖЛТЕРНИ

Нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене Харьков хулинчен тата Харьков облаҫӗнчен хӑваласа кӑларнӑ хыҫҫӑн нимӗҫсен фашистла захватчикӗсен тата вӗсемпе пӗр каварлисен тискер ӗҫӗсене тӗпчесе пӗлме тунӑ Чрезвычайнӑй Государственнӑй Комиссие ҫакӑн ҫинчен калакан материалсем килме пуҫларӗҫ: Харьков хулипе облаҫне оккупациленӗ вӑхӑтра Германи командованийӗпе гестаповецсем: эсэсовецсен «Адольф Гитлер» ятлӑ дивизийӗн командирӗ — обергруппин фюрерӗ Дитрих, эсэсовецсен «Вилнӗ пуҫ» ятлӑ дивизийӗн командирӗ — генерал-лейтенант Симон, СД-н Харьковри зондер-командин начальникӗ — штурм-банн фюрерӗ Ханебиттер, Харьков хулинчи вӑрттӑн ӗҫлекен полевой полици группин начальникӗ — полици комиссарӗ Кархан, вӑрттӑн ӗҫлекен полевой полицин 560-мӗш группин начальникӗ — полици комиссарӗ Мериц, Харьков хулинчи вӑрттӑн ӗҫлекен полевой полици группин начальникӗн заместителӗ — полици секретарӗ Вульф, Харьков хулинчи вӑрттӑн ӗҫлекен полевой полици группин чиновникӗ — Рецлав Рейнгард, Германи ҫарӗн контрразведка офицерӗ Лангхельд Вильгелм, СС ротин командирӗн заместителӗ Риц Ганс, СД-н Харьковри зондер-командин сутӑнчӑк шоверӗ М. Буланов хутшӑнса ӗҫленипе, «душегубка» текен автомашинӑсенче углерод окисӗпе вӗлерсе, пере-пере пӑрахса тата ҫака-ҫака вӗлерсе, темиҫе вунӑ пин совет гражданне (ҫав шутра хӗрарӑмсене, старриксене, ачасене, Харьков хулинчи госпитальсенче выртнӑ, аманнӑ красноармеецсене, ҫавӑн пекех тата гестапо тӗрмисенче ларнӑ ҫынсене) тискеррӗн пӗтерсе тӑкнӑ.

Чрезвычайнӑй Государственнӑй Комисси хушнипе Харьковри тата Харьков облаҫӗнчи совет органӗсем нимӗҫсен фашистла захватчикӗсен тискер ӗҫӗсем ҫинчен калакан материалсене тӗрӗслесе тухнӑ. Тӗрӗслени ҫакна кӑтартнӑ: Харьков хулинче тата Харьков облаҫӗнче тӗрлӗ тӗлте гестаповецсем «душегубка» текен автомашинӑсенче углерод окисӗпе вӗлернӗ, персе вӗлернӗ тата шӑтӑка пӑрахнӑ темиҫе вунӑ пин ҫын виллине пытарнӑ.

Медицина экспертӗсем — медицина наукисен кандидачӗ Прозоровский, профессор Смольянинов, старши научнӑй сотрудник Семеновский тата ҫар врачӗсем — Притворов, Городниченко тата Якуша, Харьков хулипе облаҫӗнче тӗрлӗ вырӑнсенче тупнӑ совет гражданӗсен чылай йышлӑ виллисене ҫиелтен пӑхса тата касса пӑхса, ҫавӑн пекех тата Чрезвычайнӑй Государственнӑй Комиссие нимӗҫсен фашистла захватчикӗсем тунӑ тискер ӗҫсем ҫинчен ҫырса янӑ материалсене вӗренсе, ҫакна пӗлнӗ: ҫав ҫынсене пурне те нимӗҫсен фашистла пуҫкасаканӗсем «душегубка» текен автомашинӑсенче углерод окисӗпе вӗлернӗ е персе пӑрахнӑ.

Нимӗҫсен фашистла захватчикӗсем Харьков хулипе облаҫӗнче тунӑ тискер ӗҫсем ҫинчен Чрезвычайнӑй Государственнӑй Комиссие тӗрлӗ вӑхӑтра ҫырса янӑ материалсене Чрезвычайнӑй Государственнӑй Комисси ноябрь уйӑхӗнче, ҫак ӗҫе тӗпчесе тухса айӑплисене уголовнӑй йӗркепе ответ тыттармашкӑн, Совет Союзӗн прокурорне панӑ.

ГОСУДАРСТВӐНА—ТЫРӐ

РЕСПУБЛИКӐРИ 15 РАЙОН ГОСУДАРСТВӐНА СУТНӐ ТЫРРА ХАТӖРЛЕВ ПУНКЧӖСЕНЕ ТУРТТАРСА ПӖТЕРНӖ

Вӑрнар, Тӑвай, Первомайски, Ҫӗмӗрле, Йӗпреҫ, Кувакино, Етӗрне, Улатӑр районӗсем хыҫҫӑн Сӗнтӗрвӑрри (райком секретарӗ Вахнин, райсовет исполкомӗн председателӗ Маклашкин юлташсем), Сӗнтӗр (райком секретарӗ Петров, райсовет исполкомӗн председателӗ Свешников юлташсем), Октябрьски (райком секретарӗ Алексеев, райсовет исполкомӗн председателӗ Херсонов юлташсем), Ишлей (райком секретарӗ Сидоров, райсовет исполкомӗн председателӗ Петров юлташсем), Калинино (райком секретарӗ Кудряшов, райсовет исполкомӗн председателӗ Валеев юлташсем, Ҫӗрпӳ райком секретарӗ Митьков) тата Шупашкар (райком секретарӗ Караушев, райсовет исполкомӗн председателӗ Миронов юлташсем) районӗсем государствӑна сутнӑ тырра хатӗрлев пункчӗсене леҫсе пӗтернӗ.

Государствӑна 122.799 пӑт тырӑ сутнӑ

ИШЛЕЙ, декабрӗн 13-мӗшӗ. (Телефонпа). Районри колхозсемпе колхозниксем государствӑна сутнӑ 122.799 пӑт тырра декабрӗн 13-мӗшӗ тӗлне пӗтӗмпех хатӗрлев пункчӗсемпе сельпосен склачӗсене турттарса пӗтерчӗҫ.

П. СИДОРОВ.
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.

Шупашкарти хатӗрлев пунктӗнче

— Паян тырӑ ӗнерхинчен те ытларах килме пултарать, ҫавӑнпа та тырӑ йышӑнма тепӗр амбарне хатӗрлес,— тесе асӑрхаттарчӗ складсен заведующине Заготзерно пункчӗн директорӗ Токарева юлташ.

Заготзерно пунктне темиҫе кун ӗнтӗ тырӑ тиенӗ лавсем киле-киле тӑраҫҫӗ. Паян, иртнӗ кунсемпе танлаштарсан, темиҫе ҫӗр лав ытларах килнӗ. Колхоз хресченӗсем хӑйсенчен ытлашши тырра государствӑна сутаҫҫӗ.

Ир. Каҫ тӗттӗмӗ те сирӗлсех ҫитмен-ха. «11 лет Октября» колхозран (Шупашкар районӗ) 15 лавлӑ обоз ҫитсе тӑчӗ.

— Паян паҫӑрах ҫитмеллеччӗ, кунта тӑхӑр сехетчен ӗҫлемеҫҫӗ пулӗ, терӗмӗр. Кӑна пӗлнӗ пулсан, ирттерех тухмаллаччӗ,— терӗ вӗсенчен пӗри. Вӗсем пӗр сехет те тӑмарӗҫ, лав ҫинчи тырра пушатса та тухрӗҫ.

Паян пуре Шупашкарти Заготзерно пунктне 1.300 лавпа 400 тоннӑна яхӑн тырӑ турттарса килнӗ.

Заготзерно пункчӗ тырра пӗр чарӑнмасӑр йышӑнса тӑма тӑрӑшать. Кунта тырра кунӗн-ҫӗрӗн илеҫҫӗ. Тырӑ йышӑннӑ ҫӗрте ӗҫлекен Шишкина, Зимин, Карташов, Архипов юлташсем вӑхӑта пӗр минута та сая ямаҫҫӗ. Ҫавӑн пекех тырӑсене тӗрӗслекен лаборатори те (заведующийӗ Тихонова юлташ) аван ӗҫлет. Тырӑ леҫме пынӑ колхозниксем черет кӗтсе тӑмаҫҫӗ.

Тырӑ леҫме пынӑ колхозниксем валли буфет пур. Буфетра пылак чей, сӑрапа эрех сутаҫҫӗ. Анчах буфет ӗҫӗнче йӗркелӗх ҫук. Чебторг (директорӗ Судаков) кунти буфет ӗҫӗпе сахал интересленни курӑнать. Ӗҫмелли яппаласене пурне те пӗр вырӑнта сутаҫҫӗ. Ҫавӑн пирки черет пысӑк. Ку ӗҫе лайӑхрах йӗркелеме лайӑх условисем пур. Буфет пулнӑ вырӑн пушах тӑрать. Буфетри ӗҫмелли-ҫимеллисене хулари ҫынсене нимӗн черетсӗрех парса яраҫҫӗ, ҫавна пула вара йӗркесӗрлӗх пулса тӑрать.

— Ку — вӑхӑтлӑх ӗҫ, ҫакӑнтан йӗркеллӗрех тума май та ҫук,— тет Шупашкар хула совечӗн суту-илӳ пайӗн заведующийӗ Журавлев. Ҫакнашкал шухӑш-кӑмӑлпа пурӑнсан, паллах, йӗркелӗх пулмӗ.

Заготзерно пункчӗн бухгалтерийӗ те хӑйӗн ӗҫне вӑхӑтра туса ӗлкӗреймест. Тырӑ панӑ квитанцие илме колхозниксен нумай кӗтсе тӑма тивет. Главнӑй бухгалтер Бурова ҫак ӗҫе йӗркелеме тӑрӑшмасть. Кассенче вӑл бухгалтерие килсе те курмасть.

Халӗ Заготзерно пунктне обязательнӑй йӗркепе тырӑ панӑ вӑхӑтринчен те ытларах лавсем килсе тӑраҫҫӗ. Колхозсем государствӑна обязательнӑй йӗркепе тырӑ панӑ чухне Заготзерно пунктне кунне 200 тоннӑран ытла тырӑ пыни пулман. Халӗ хӑшпӗр кун 400 тонна та ытла тырӑ килсе тӑрать. Ҫавӑнпа та тырра йышӑнас ӗҫе нихӑҫанхинчен те ытларах аванлатни кирлӗ.

Ф. МАЛЫШКИН.

Чехословаки Республикин Президенчӗ Эдуард Бенеш господин Мускава килни

Декабрӗн 11-мӗшӗнче Чехословаки Республикин Президенчӗ доктор Эдуард Бенеш Мускава килнӗ. Унпа пӗрле Чехословаки Республикин ССР Союзӗнчи Посолӗ З. Фирлингер господин, Президент Кабинечӗн Начальникӗ Я. Смутный господин, Чехословакин Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Министерствин Информаци Службин Начальникӗ Я. Краус господин, Чехословаки ҫарӗн генерал-лейтенанчӗ А. Нижборский, Чехословакин Государство Совечӗн членӗ Б. Врбенский господин, ҫавӑн пекех Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗн Заместителӗ А. Е. Корнейчук юлташ тата НКИД-ӑн Протокол Отделӗн Заведующийӗн ӗҫӗсене туса пыракан Г. И. Фомин юлташ килнӗ.

Вокзалра Эд. Бенеш г-на ҫаксем кӗтсе илнӗ: ССР Союзӗн Верховный Совет Президиумӗн Председателӗн Заместителӗ Н. Я. Наталевич юлташ, Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов юлташ, Маршал К. Е. Ворошилов, Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗн Заместителӗ С. А. Лозовский юлташ, Совет Союзӗн Чехословаки Республикин Правительстви ҫумӗнчи Посолӗ В. З. Лебедев юлташ, СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. Ф. Горкин юлташ, Мускав хули Совечӗн Председатель Заместителӗ М. А. Яснов юлташ, Мускав хулин Коменданчӗ генерал-майор К. Р. Синилов, СССР Совнаркомӗн Чехословакин ҫар чаҫӗсене тӑвас тӗлӗшпе ӗҫлекен Уполномоченнӑйӗ Г. С. Жуков юлташ, НКИД-ӑн Европа ӗҫӗсен 4-мӗш Отделӗн Заведующийӗ В. А. Зорин юлташ, НКИД-ӑн Пичет Отделӗн Заведующийӗ Н. Г. Пальгунов юлташ, Оборона Халӑх Комиссариачӗн Тулашри Ҫыхӑну Отделӗн Начальникӗ генерал-майор В. Н. Евстигнеев, пӗррремӗш рангри капитан Совет Союзӗн Геройӗ Н. П. Египко, Мӗнпур Славянсен Комитечӗн Председателӗ генерал-лейтенант А. С. Гундоров, Мӗнпур Славянсен Комитечӗн Председатель Заместителӗ З. Неедлы профессор, Мӗнпур Славянсен Комитечӗн Ответлӑ Секретарӗ В. С. Осьминин юлташ.

Кӗтсе илнӗ чухне вокзалра ҫаксем пулнӑ: Югослави Посолӗ С. Симич господин, Франци Халӑхне Ирӗке Кӑларассишӗн Кӗрешекен Комитетӑн Полномочнӑй Представителӗ Р. Гарро господин, Чехословакин ССР Союзӗн Ҫар Миссийӗн Начальникӗ Г. Пика полковник, Чехословакин ССР Союзӗнчи чаҫӗсен командующийӗ Я. Кратохвил генерал тата Чехословаки Посольствин членӗсем.

Кӗтсе илнӗ вӑхӑтра хисеплӗ хурал тӑратнӑ тата Чехословакипе Совет Союзӗн гимнӗсене каланӑ. Вокзала Чехословакин тата Совет Союзӗн ялавӗсемпе илемлетнӗ.

М. И. Калинин юлташ Чехословаки Республикин Президентне Эд. Бенеш господина йышӑнни

Декабрӗн 11-мӗшӗнче СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. И. Калинин юлташ Чехословаки Республикин Президентне Эдуард Бенеш доктора йышӑннӑ.

Калаҫура СССР Верховный Совет Президиумӗн Председатель Заместителӗ Н. Я. Наталевич юлташ, Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗн Заместителӗ А. Е. Корнейчук юлташ тата Чехословаки Республикин Совет Союзӗнчи Посолӗ З. Фирлингер господин пулнӑ.

Чехословаки Республикин Президентне Эд. Бенеш господина хисеплесе СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. И. Калинин юлташ патӗнче пулнӑ апатлану

Декабрӗн 11-мӗшӗнче СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. И. Калинин юлташ Чехословаки Республикин Президентне Эд. Бенеш доктора хисеплесе Кремльте апатлану тунӑ.

Апатланура ҫаксем пулнӑ: Эд. Бенеш господин, Чехословаки Республикин ССР Союзӗнчи Посолӗ З. Фирлингер господин, Президент Кабинечӗн Начальникӗ Я. Смутный господин, Чехословакин Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Министерствин Информаци Службин Заведующийӗ Я. Краус господин, генерал-лейтенант А. Нижборский, Чехословакин ССР Союзӗнчи ҫар чаҫӗсен командующийӗ генерал Я. Кратохвил, Чехословакин ССР Союзӗнчи Ҫар Миссийӗн Начальникӗ полковник Г. Пика тата Эд. Бенеш господинпа пӗрле килнӗ ҫынсем, ҫавӑн пекех тата Чехословакин ССР Союзӗнчи Посольствин членӗсем.

Совет Союзӗ енчен ҫаксем пулнӑ: Маршал И. В. Сталин, В. М. Молотов, Маршал К. Е. Ворошилов, А. И. Микоян, Г. М. Маленков, Л. М. Каганович, А. А. Жданов, Н. А. Вознесенский, А. С. Щербаков, Маршал А. М. Василевский, Н. Я. Наталевич, адмирал Н. Г. Кузнецов, А. Е. Корнейчук, С. А. Лозовский, М. М. Литвинов, И. М. Майский, В. З. Лебедев, А. Ф. Горкин, авиаци генерал-полковникӗ С. А. Худяков юлташсем тата ыттисем те.

ССР Союзӗпе Чехословаки Республики пӗр пӗринпе туслӑ пурӑнасси, пӗр-пӗрне пулӑшса тӑрасси тата вӑрҫӑ хыҫҫӑн пӗрле килӗштерсе ӗҫлесси ҫинчен договор туни

Юлашки вӑхӑтра ССР Союзӗн Правительствипе Чехословаки Республикин Правительстви хушшинче пӗр-пӗринпе туслӑ пурӑнасси, пӗр-пӗрне пулӑшса тӑрасси тата вӑрҫӑ хыҫҫӑн пӗрле килӗштерсе ӗҫлесси ҫинчен договор тӑвас пирки калаҫусем пулса иртнӗ.

Ҫав калаҫусенче пӗр-пӗрне чӗререн тата туслӑн ӑнланса каланӑ. Ҫак ҫулхи декабрӗн 12-мӗшӗнче вара Мускавра «Социализмлӑ Совет Республикисен Союзӗпе Чехословаки Республики пӗр-пӗринпе туслӑ пурӑнасси, пӗр-пӗрне пулӑшса тӑрасси тата вӑрҫӑ хыҫҫӑн пӗрле килӗштерсе ӗҫлесси ҫинчен тунӑ договора» алӑ пуснӑ.

Договора Кремльте алӑ пуснӑ, ӑна СССР Верховный Совечӗн Президиумӗ хушнипе Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов юлташ Чехословаки Республикин Президенчӗ хушнипе Чехословаки Республикин Мускаври Чрезвычайнӑй тата Полномочнӑй Посолӗ З. Фирлингер господин алӑ пуснӑ.

Договора алӑ пуснӑ чухне ССР Союзӗ енчен ҫаксем пулнӑ: И. В. Сталин юлташ, М. И. Калинин юлташ, К. Е. Ворошилов юлташ, Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗн Заместителӗ А. Е. Корнейчук юлташ, НКИД Коллегин членӗ А. П. Павлов юлташ, Совет Союзӗн Чехословаки Республикин Правительстви ҫумӗнчи Чрезвычайнӑй тата Полномочнӑй Посолӗ В. З. Лебедев, НКИД-ӑн Европа тӗлӗшпе ӗҫлекен IV-мӗш Отделӗн Заведующийӗ В. А. Зорин юлташ, НКИД-ӑн Пичет Отделӗн Заведующийӗ Н. Г. Пальгунов юлташ.

Договора алӑ пуснӑ чухне Чехословаки Республики енчен ҫаксем пулнӑ: Чехословаки Республикин Президенчӗ доктор Эд. Бенеш, Президент Кабинечӗн Начальникӗ Я. Смутный господин, Чехословакин Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Министерствин Информаци Службин Начальникӗ Я. Краус господин, Чехословаки ҫарӗн генерал-лейтенанчӗ А. Нижборский, Президент Секретарӗ Э. Таборский, Чехословакин Государство Совечӗн членӗ Б. Врбенский господин, Чехословакин ССР Союзӗнчи чаҫӗсен командующийӗ генерал Я. Кратохвил, Чехословакин ССР Союзӗнчи Ҫар Миссийӗн Начальникӗ полковник Г. Пика, Чехословаки Посольствин дипломатилле сотрудникӗсем Д. Оутрата господин, Л. Клучка господин тата Э. Мартинэк господин.

ВЦСПС-па Халăх Комиссариачĕсенче

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариачĕ. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн 1943 çулхи ноябрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводрах хăвармалла тунă тата ăна пĕрремĕш премин пама йышăннă.

* * *

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариачĕ. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн 1943 çулхи ноябрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса. Володин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завода виççĕмĕш премин пама йышăнна.

Вунпĕр уйăхра 320 процент

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, декабрĕн 13-мĕшĕ. (Телефонпа). Енĕшкассинчи «Стрела» промартель членĕсем, Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, çулталăкри плана срокчен тултарма пулнăччĕ. Вĕсем хăйсен обязательствине пурнăçа кĕртессишĕн вăйа шеллемесĕр ĕçлерĕç. Стахановецсем Семенова, М. Алексеева, Н. Куприянова тата ытти нумай юлташсем те ĕç нормине куллен 175-шер процент таран тултарса пычĕç.

Артель коллективĕ декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне çулталăкри плана пĕтĕм продукци енĕпе 320 процент, куллен кирлĕ таварсем енĕпе 493 процент тултарнă. Çĕнĕ çулччен артель çĕршыва темиçе вунă пин тенкĕлĕх продукци туса парать.

С. ШАДИН.

Çамрăк рабочисен пархатарлă ĕçĕсем

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче Канашри вагонсем юсакан завод коллективне çамрăксем чылай хутшăнчĕç. Вĕсем производство техникине тимлĕн вĕренсе. кĕске вăхăтрах професси тунаççĕ, ĕç тухăçлăхне ÿстерсе пыраççĕ.

Забиякин юлташ начальник пулса ĕçлекен цехра юлашки уйăхсенче кăна темиçе вунă çамрăк стахановецсен ретне тăчĕç. А. Карлеева токарь пулса ĕçлет. Вăл нормăна 300 процента яхăн тултарать. Савăн пекех Н. Егорова юлташ та икĕ нормăран кая тултармасть.

Слесарь Виктор Марунов çамрăксен бригадине ертсе пырать. Вăл, техникăна тĕплĕн вĕренсе пырса, куллен 4 норма таран тултарма пуçларĕ. Хăйĕн опычĕпе ĕçлеме хальь 9 çамрăка вĕрентет. Сергей Старостин та хăйĕн опычĕсене ытти çамрăксене парать.

Халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ фронта пулăшассишĕн вăй хурса ĕçлеме чĕннине заводри çамрăксем çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе ответлеççĕ. Темиçе вунă çамрăк стахановла вахтăна тăчĕç.

В. АНДРЕЕВ.

* * *

Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводри çамрăк рабочисем хăйсен квалификацине ÿстерсех пыраççĕ. Çулталăк пуçланнăранпа 363 çын стахановла шкулсенчен. 262 çын квалификацие ÿстермелли курссенчен вĕренсе тухнă. Çамрăксем ĕç тухăçлăхне ÿстерсех пыраççĕ. Кăçалхи 9 уйăх хушшинче ĕç тухăçлăхĕ 23 процент ÿснĕ.

Çамрăк рабочисем Н. Собачева, Н. Юрьева юлташсем заводра пĕр çул яхăн кăна ĕçлеççĕ-ха. Çак кĕске вăхăтрах Собачева юлташ ĕç нормине 119 процентран 254 поцента çити, Юрьева юлташ 179 процентран 204 процента çити ÿстерне. Слесарь А. Ильина ĕç нормине 221 процент тултарать.

Кун пек тĕслĕхсене нумай илсе кăтартма пулать. Вĕсем ĕнтĕ заводри çамрăксем техникăна вĕренес ĕçре ÿссе пынине çирĕплетсе параççĕ.

Г. БЕЛЬСКИЙ.

Вăрман хатĕрлевĕ

Сĕнтĕрвăрри районĕ хăйĕн обязательствине пурнăçа кĕртрĕ

КАНАШ. (Телеграфпа). Сĕнтĕрвăрри районĕнчи колхозсем, Сталин юлташăн Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарни çинчен тунă докладне ответлесе, чугун çул валли вутă хатĕрлемелли плана декабрĕн 15-мĕшĕнче тултарма сăмах панăччĕ. Вĕсем хăйсен обязательствине срокчен пурнăçа кĕртрĕç. Декабрĕн 11-мĕшĕнче вутă хатĕрлемелли плана хатĕрлес енĕпе 101 процент, турттарас енĕпе 103,5 процент тултарнă. Халĕ вăл районри колхозсем 1944-мĕш çулхи пĕрремĕш кварталти плана мартăн 20-мĕшĕ тĕлне тултарас тĕллевпе ĕçлеççĕ.

К. ФЕДОРОВ.
Канаш вăрманпромхозĕн директорĕ.

Тăван çĕршывăн сумлăмлă патриочĕсем

Петр Маркиянов

Вăрçă пуçланнă кунна хальхи пекех лайăх астăвать-ха вăл. МТС картишĕнче — уйхир карапĕсем. Комбайнер Петр Маркиянович тата унăн юлташĕсем тирпейлĕн юсаса лартнă вĕсене. Комбайнсен кашни пайне, кашни винтне тимлĕн юсаса, çу сĕрсе. тасатса майлаштарнă.

Тем анлăш саралса выртакан хиртелаша пĕкки çÿллĕш тырпул çитĕннĕ. Тăрăшса ĕçле те тулăх пурăнăçпа пурăн. Социализмлă çĕршывăн тивлечĕпе савăнса, мирлĕ те хавасла пурнăçпа пурăн! Çапла ĕмĕтленнĕ Петр Маркиянович юлташĕсемпе пĕрле комбайнăн кашни пайне вырнаçтарса-вырнаçтара лартнă чухне. Анчах унăн ĕмĕчĕсене çынçисен тискер кайăк — Гитлер тата унăн вăрă-хурахла ушкăнĕсем кĕтмен çĕртен татрĕç...

Вăрçă! Çак хăрушă та чĕрене ыраттаракан хыпар сасартăк пĕтĕм çĕршыва саралчĕ. Нимĕç пусмăрçисене хирĕç халăх вăрçи пуçланчĕ. Совет халăхĕ хăйĕн хастар та пултаруллă ывăлĕсене фронта ăсатрĕ. Юратнă çулпуçăмăр Сталин чĕннипе пĕтĕм халăх аслă вăрçа çĕкленчĕ. «Йăлтах фронт валли, йăлтах çĕнтерÿ тума!» — çак лозунгпа ĕçлеме пуçларĕ мĕнпур халăх.

Хăйпе пĕрле ĕçлекен юлташĕсене пĕр çĕре пуçтарчĕ те:

— Пирĕншĕн, пирĕн уйхирсемпе вăрмансемшĕн, пирĕн хуласемпе ялсемшĕн, тăван çĕршывăн чыслăхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн паттăррăн çапăçма тантăшсем фронта тухса кайрĕç — терĕ Петр Маркиянович. — Пирĕн ĕнтĕ малашне хамăршăн та, фронта кайнă юлташсемшĕн те, ик-виçĕ çыншăн ĕçлес пулать. Пĕр сăмахпа каласан, пуян та сĕтеклĕ çĕр çимĕçсем мĕн чухлĕ пама пултарать, вĕсене йăлтах фронтпа çĕршыв валли, тискер тăшмана çапса аркатма ĕсатса тăрас пулать пирĕн, — терĕ.

Çакă вăл совет патриочĕсем хăрушă кунсенче хăйсен тăван çĕршывĕ умĕнче тупа туни пулчĕ.

Унтанпа вăхăт нумай иртрĕ. Çак вăхăтра Петр Маркиянович Маркиянов хăйĕн сăмахне мухтавла тивĕçлĕн пурнăçласа пычĕ. 1942 çулта вăл хăйĕн комбайнĕпе 457 гектар çинчи тырпула, кăçал вара, çанталăк тăтăшах йĕпе-сапаллă пулчĕ пулин те, 403 гектар çинчи тырпула тирпейлĕн вырса пуçтарчĕ. Сезонри задание 360 процент ытла пурнăçларĕ.

Нумай пулмасть чăваш ĕçсыннийĕсем çак патриотăн тепĕр ырă ĕçĕ çинчен пĕлчĕç. Колхоз хресчевĕсен патриотла пуçарăвне йышанса, вăл хăйĕн хуçалăхĕнчи 100 пăт тырра Хĕрлĕ Çара пулăшма государствăна сутрĕ.

— Тăшмана хĕвелавăçнелле хăвалаcа пыракан мухтавлă Хĕрлĕ Çара пулăшмашкăн эпĕ нимĕн те шеллесе тăмастăп, — терĕ Петр Маркиянович Маркиянов, государствăна сутнă тырра хатĕрлев пунктне леçсе панă чухне.

* * *

Петр Маркиянович Маркиянов Йĕпреç машинно-тракторнăй станцийĕнче 12 çул хушши ĕçет ĕнтĕ. Кунта вăл 1932 çулта, Шăхасанра трактористсен курсĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн килнĕ. Малтан тракторист пулса ĕçленĕ. Часах вăл хăйĕн пултаруллăхне кăтартса панă. МТС дирекцийĕ ăна трактор бригади бригадирĕн помощникĕ пулма уйăрса лартнă. Нумай та вăхăт иртмен, Петр Маркиянович бригадир пулса ĕçлеме тытăннă.

Ĕçре çын ÿсса патварланать. Петр Маркиянович Горький хулинче комбайнерсен курсĕнче вĕренет. Ун хыççăн, 1936 çулта, комбайнер пулса ĕçлеме тытăнать. «Коммунар» комбайн çинче ĕçлесе, малтанхи çулах тухăçлă ĕçлекен комбайнер пулнине кăтартса парать вăл. Планпа 85 гектар тыррине пуçтарса кĕртмелле пулнă пулсан, вăл сезонра 187 гектар çинчи тырпула вырса пуçтарнă. Ун хыççăн вăл ĕç тухăçлăхне çулсерен ÿстерсе пынă.

Кăçал çанталăк улшăна-улшăна тăчĕ. Çакă вара комбайнерсен ĕçне чылай йывăрлатрĕ. Ирхине çăмăр тырпула йĕпетет те, кăнтăрлаччен е кăнтăрла иртмесĕр те ĕçлеме памасть. Апла пулин те Петр Маркиянович хĕшпĕр кунсенче 23-шер гектар çинчи тырпула вырса пуçтарма, кашни кун 20-шер тонна ытла тырă çапса кĕртме пултарчĕ.

Комбайнпа тырă вырас ĕçри çитĕнÿсемшĕн Петр Маркияновича комбайнпа тырă вырас ĕç мастерĕн ятне панă.

Петр Маркиянович опытлă комбайнер çеç те мар, вăл трактор бригадин пултаруллă руководителĕ те. Кăçал вăл ертсе пыракан хĕрарăм-трактористкăсен бригади çулталăкри плана 150 процент ытла тултарчĕ, 3.700 килограмм ытла горючи перекетлесе хăварчĕ. Бригада МТС-ра пĕрремĕш вырăна тухрĕ.

Маркиянов юлташăн çитĕнĕвĕсен тупсăмĕ ăçта-ха? Паллах, унăн инмĕнле вăрттăнлăх та çук. Ĕç ăнăçлăхне бригадăри ĕçе тĕрĕс йĕркелесе пыни, машинăсене юратса та тирпейлĕ тытса усрани татса парать. Вăл хăй кăткăс машинăсен техникине тĕплĕн вĕренсе, çав техника мĕн пама пултарнине йăлтах илме тăрăшать. Хăйĕн машинисене куç шăрçисене сыхланă пекех упрать, вĕсене ĕçе тухма вăхăтра хатĕрлет, вăхăтра юсаса тăрать. Кăçал вăл хăйĕн комбайнне июнĕн 10-мĕшĕ тĕлнех тĕплĕн юсаса çитернĕ. Тырпулсене пухса кĕртнĕ вăхăтра талăкра 16—17 сехет хушши пĕр чарăнмасăр ĕçленĕ.

Маркиянов юлташ ĕçре кашни минутăлах усă курма тăрăшать, ĕçлемесĕр пĕр хушă та тăмасть. Кăçал, акă, комбайнсемпе тракторсене çумăр çунă вăхăтра е çĕрле юсанă.

Маркиянов юлташ комбайн ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе сахал мар вăй хучĕ. Кăçалхи сезонра унăн сĕнĕвĕпе кашни комбайн çумнех «Джекенс сăнчăрĕсене» хÿтĕлемелле щитсем тунă. Çапла вара пĕр комбайн та стройран тухман.

Унăн рационализацилле сĕнĕвĕсем кăçалхи çумăрлă çанталăк вăхăтĕнче тырă вырас ĕçе ăнăçлăн туса пыма пулăшрĕç. Çанталăк йĕпе-сапаллă пулнă вăхăтра тракторсем, çавăн пекех комбайнсем те, нÿрлĕ тăпра ăшне путса чарăна-чарăна ларнă. Комбайн ан путтăр тесе, вăл малтанхи кунсенче комбайна икĕ трактор кÿлсе, вĕсен уралисем çумне уширительсем туса ĕçленĕ. Çапла майпа Маркиянов юлташ çумăрлă çанталăкра 60 гектар çинчи тырпула пухса кĕртме пултарчĕ. Нÿрĕ тырра çийĕнчех пушатса хĕвел çинче типĕтнĕ.

Петр Маркиянович ыттисенчен çак енĕсемпе уйăрăлса тăрать: ĕçре вăл яланах хастар, дисциплинăллă; хăй те лайăх ĕçлет, çынсене те лайăх ĕçлеттерет. Вăл хăйĕн ĕçри опычĕсене çамрăк трактористсемпе комбайнерсене парать. Унăн вĕренекенĕсем нумайĕшĕ халĕ хурçă çутсене пултаруллăн ертсе çÿрессĕ.

* * *

Мухтавлă Хĕрлĕ Çар фронтра янкăçăн пулмăн паттăрлăхпа геройлăх кăтартса çапăçать. Совет ĕçсыннийĕсем Украинăпа Белоруссири темиçе çĕр ялпа саласене ирĕке кăларни çинчен пĕлеççĕ. Вăрçă вĕçленесси патнелле пырать. Хĕрлĕ Çар нимĕç захватчикĕсене кĕçех хамăр çĕршывран хÿтерсе кăларĕ. Совет халăхĕ хăйĕн мухтавлă çарне çĕнтерÿ тума мĕн вăй çитнĕ таран вăйлăн пулăшса тăрать.

Вăрçă пĕтсен, каллех телейлĕ те савăнăçлă пурнăç пуçланĕ. Вăрçă пĕтнĕ ятпа çĕршывра чаплă уяв пулĕ, çав кун совет халăхĕ хăйĕн чаплă кĕрекине фронтра паттăррăн та хăюллăн кĕрешнĕ ывăлĕсене лартĕ, вĕсем хушшинче тылри патриотсем те пулĕç. Тăван çĕршывăн сумлăмлă патриочĕсен хисеплĕ ретĕнче Петр Маркиянович Маркиянов, комбайнпа тырă вырас тĕлĕшпе ик-виçĕ çыншăн ĕçлекенскер тата государствăна хăйĕн 100 пăт тыррине сутнăскер, пулĕ. Пирĕн халăх ăна ĕмĕр-ĕмĕр манмĕ.

Г. ТИМОФЕЕВ.

В. М. Молотов юлташ Колумби посланникне А. Мичельсен господина йышăнни

Декабрĕн 11-мĕшĕнче Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ Колумбия ССР Союзĕнчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй министрне А. Мичельсен господина йышăннă, йышăну А. Мичельсен господин хăйĕн верительнăй грамотисене СССР Верховный Совет Президиумĕн Председательне карас шутпа пулнă.

Ют çĕршывсенче

„Таймс" хаçат Югославири ĕçсем çинчен

ЛОНДОН, декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). «Таймс» хаçат хăйĕн умстатьинче паян çапла çырать: Югославире Тито генерал ертсе пыракан вăхăтлăх правительство тунă. Унта наци, тĕн тата политика тĕлĕшпе пур тĕп ушкăнсем те кĕнĕ. Çав правительствăна туни Югославин пĕтерсе лартнă пĕрлĕхне çĕнĕрен ура çине тăратас тĕлĕшпе паллă ĕç пулса тăрать.

Михайлович генерал ертсе пыракан четниксем юлашки вăхăтра иккĕлентерекен позици йышăннине тата вĕсем Тито генералăн партизанĕсем çине тăшманла пăхма йышăннине палăртса, «Таймс» малалла çапла çырать: «Ак çакă тата ытларах кÿрентерет: Китайри Югослави правительстви, хăй офицерсен, чиновниксен тата дипломатсен пĕчĕк ушкăнĕ ячĕпе çеç каласма пултарать пулин те, Тито генералăн делегачĕсем тата унăн правительстви законлă пулнине йышăнмасть».

«Иден Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчен таврăнсан, парламент çав ĕçсем çинчен, тен, çĕнĕ хыпарсем илĕ. Вăхăтлăх правительство туса хуни Югослави халăхне ирĕке кăларакан юхăм пуçланнине пĕлтерет, вăл Европа çĕрĕнче Германи çарне организованно хирĕç тăмалли çирĕп ушкăн пулса тăчĕ. Ун хыççăн ытти ĕçсем те пулĕç», тесе çырать хаçат.

Англипе Америкăн сыхăну тытакан офицерĕсем Югославие анни

ЛОНДОН, декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Америкăн транспорт самолечĕ Югославири пысăках мар аэродром çине Англипе Америкăн сыхăну тытакан офицерĕсене антарса хăварнă. Самолет, нимĕçсен тыткăна илнĕ офицерн лартса, хăйĕн базине таврăннă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, декабрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, декабрĕн 10-мĕшĕнче каçхине «Москито» йышши самолетсем, аялтанах вĕçсе пырса, Германин çурçĕр-хĕвеланăç пайĕнчи чугун çулпа ытти çулйĕр объекчĕсене атакăланă.

Акгли бомбардировщикĕсем ноябрь уйăхĕнче çĕрле мĕн пурĕ 4.500 самолет-вĕçев тунă. 14.500 тонна бомба пăрахнă. Вĕсенчен 13.000 тонни Германи территорийĕ çине пăрахнă.

НИМĔÇСЕН ЛЕЙПЦИГРИ КАЗАРМИСЕНЧЕ МАССĂЛЛА УХТАРУ ТУНĂ

СТОКГОЛЬМ, декабрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Швецин «Афтонтиднинген» ятлă хаçачĕ çапла пĕлтерет: кунта илнĕ хыпарсем тăрăх, гестапо нимĕçсен Лейпцигри казармисенче массăллă ухтару тунă. Казармăсене полици отрячĕсем хупăрласа илнĕ. Хаçат каланă тăрăх, ухтару пĕр казармăра гитлеровецсене хирĕç çырнă листовкăсем тупнă пирки пуçланнă. (Çав листовка нимĕç салтакĕсене хăйсен офицерĕсене ятлеме пăрахма чĕннĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Çуракине хатĕрленмелли уйăхлăх

„Марс" колхоз уя 4 пин лав тислĕк кăларнă

ЕЛЧĔК. (Хамăр корр.). Сăрьеленчи «Марс» колхоз членĕсем (колхоз председателĕ А. Гаязов юлташ) çитес çул вăйлă тырпул туса илессишĕн хĕрÿллĕн ĕçлеççĕ. Колхозăн çурхи тырăсем 600 гектар çине акмалла. Çакăн чухлĕ çĕр лаптăкĕ çине вĕсем кĕркунне 1250 лав тислĕк кăларасси сĕртме сухи туса хăварчĕç.

Халĕ, çуракине хатĕрленнĕ май, колхозниксем уйхирте ытларах юр тытса хăварма 200 щит тунă, вĕсенчен пĕр пайне уя кăларса лартнă ĕнтĕ, кулленех тислĕк турттараççĕ. Хăш вырăна мĕн чухлĕ тислĕк тăкассине малтанах пăхса хунă. Халĕ çав вырăна тислĕк турттарса тăраççĕ. Тислĕке, пысăк купасем туса, лайăхрах сĕрмелле тăваççĕ. Паянхи куна «Марс» колхоз çапла уйхире 4 пин лав тислĕк кăларнă.

Вăрлăх—тырпул тухăçлăхне татса парать. Колхозниксем вăрлăх хатĕрлес ыйту çине уйрăмах тимлĕн пăхаççĕ. Вĕсене пурĕ 950 центнера яхăн вăрлăх кирлĕ пулать. Çакăн чухлĕ вăрлăх уйăрса хунă. Вăрлăх сортлас тĕлĕшпе колхозра ятарласа бригада организациленĕ. Бригадăра чи хастарлă çамрăксем ĕçлеççĕ. М. Фасхутдинова, С. Эмирова, М. Семенова, Ф. Исмеев юлташсем вăрлăх сортлана çĕрте кулленех иквиçшер норма тултараççĕ. Вăрлăха тимлĕн тасатаççĕ.

«Марс» колхоз çуракинче 8 сеялкăпа усă курма шутлать. Кĕраки туса пĕтерне хыççăнах сеялкăсене пурне те машинăсен сарайне кĕртсе лартнă, пылчăкран тасатнă, çу сĕрнĕ, çĕмĕрĕлнисене юсаса ĕçе тухма хатĕрленĕ. Çавăн пекех плугсемпе сÿресене, урапасемпе выдвансене те тирпейлесе лартнă.

Коммунистсемпе комсомолецсем колхозра çуракине хатĕрленес ĕçсене ертсе пыракансем пулса тăраççĕ. Уйхирти ĕçсене тунă вăхăтри пекех колхозра стена хаçачĕсем халĕ те тăтăшах тухса тăраççĕ. Кашни бригадăрах çак иртнĕ уйăхра стена хаçачĕсем икшер номер тухнă. Коммунист Ф. Салахеев кашни кунах колхоз активне пухса калаçусем туса ирттерет.

Хуçалăхри ĕçсене вăкăрсемпе тăваççĕ

КАНАШ. Çуракине хатĕрленнĕ май, Сиккассинчи Шмидт ячĕпе тăракан колхоз вăкăрсемпе сĕт сахал паракан ĕнесене—пурĕ 18 пуç ĕçлеме вĕрентнĕ. Выльăхсене кÿлсе ĕçлес тĕлĕшпе кунта колхозăн старши конюхĕ А. Игнатьев юлташ тăрăшса ĕçлет. Ку ĕçе шкулта вĕренекен ача П. Иванов та ăнăçлăн туса пырать. Вăл пĕр вăкăра кÿлсе çÿреме вĕрентнĕ.

Ĕçе вĕрентнĕ вăкăрсемпе халĕ колхозра улăм кÿреççĕ, тислĕк турттараççĕ. Çапла, хуçалăхри хăшпĕр ĕçсене кунта йăлтах ĕне-выльăхсемпе тăваççĕ.

С. Ш.

Çитес çулхи тухăçлă тырпулшăн

ТАБАЙ, декабрĕн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Кармалти «Красноармеец» колхоз çуракине тĕплĕн хатĕрленет. Паянхи куна вăрлăхсене тасатса сортласа хунă, уя 1.600 лав тислĕк кăларнă, 8 гектар çинче юр тытнă, 8 плуг юсаса хунă. Колхоз январĕн 1-мĕшĕ тĕлне çуракине пур енĕпе те хатĕрлесе çитме тăрăшать.

В. ВЕСЕЛОВ.

Республикăри МТС-сем 1943-мĕш çулхи IV-мĕш кварталта тракторсем юсамалли плана декабрĕн 10-мĕшĕ тĕлне мĕн чухлĕ тултарнине кăтартакан

СВОДКА

МТС-сем	Миçе процент тултарнă
Йĕпреç	135,2
Шупашкар	125,0
Красноармейски	112,5
Шăхасан	106,6
Канаш	105,5
Комсомольски	100,0
Вăрнар	81,2
Сĕнтĕр	81,2
Чкаловски	75,0
Ишлей	66,6
Элĕк	62,5
Елчĕк	58,3
Çĕрпÿ	58,3
Первомайски	54,5
Кувакино	45,7
Хĕрлĕ Чутай	40,0
Вăрмар	35,2
Тăвай	31,2
Шăмăршă	23,0
Пăрачкав	20,0
Куславкка	20,0
Çĕмĕрле	10,0
Улатăр	—
Сĕнтĕрвăрри	—
Етĕрне	—
ЧАССР тăрăх	55,5
Декабрĕн 5-мĕшĕ тĕлне пулнă	47,0

Предприятисенчен пĕлтереççĕ

КАНАШ. Хулари предприятисемпе промысла артелĕсенчен чылайĕшĕ Сталинла Конституци кунне çĕнĕ çитĕнÿсемпе кĕтсе илчĕç. Çапла, «Красный воин» артель 1943 çулхи плана ирттерсе тултарчĕ. «Индпошив», «Авангард», «Швейник» артельсем ноябрьти плана ирттерсе тултарнă. Вĕсем çулталăкри плана çак кунсенчех вĕçлесе çитереççĕ.

(Хамăр инфор.).

УКÇАПА ЯПАЛАСЕН ИККĔМĔШ ЛОТЕРЕЙИН БИЛЕЧĔСЕНЕ ТЫТСА ТĂРАКАНСЕНЕ ПĔЛМЕ

Укçапа япаласен иккĕмĕш лотерейин выляса илнĕ билечĕсем тăрăх илмелли укçапа япаласене 1944-МĔШ ÇУЛХИ ЯНВАРĔН 1-МĔШĔНЧЕ ПАМА ПĂРАХАÇÇĔ, çав числаччен илсе юлма васкăр.

Выигрыш таблицисем тăрăх аппари билетсене тĕрĕслесе тухăр.

Пур перекет кассисем те, предприятисемпе учрежденисенчи тата колхозсенчи комсомолецсем те, ялсовечĕсем çумĕнчи финанс агенчĕсем те тĕрĕслесе параççĕ.

ЧĂВАШ АССР-ĔНЧИ ПЕРЕКЕТ КАССИСЕМПЕ ГОСКРЕДИТ УПРАВЛЕНИЙĔ.

ШУПАШКАРТИ ГОРПРОМКОМБИНАТ çакăн çинчен пĕлтерет: вăл пур организацисене те, колхозсене те тата уйрăм çынсене те хăйсен материалĕнчен тир-сăран (сăмахран, сурăх тирĕ) гуса парать тата тир тумтир (кĕрĕк, тăлăп, линшак-кĕрĕк т. ыт. те) çĕлесе парать.

Адрес çапла: гор. Чебоксары, ул. Плеханова, 25.

Хунтан ытти çĕре кайса ялан ĕçлеме главнăй бухгалтерсем, старши бухгалтерсем, бухгалтерсем кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, д. 7,2-й под"езд (вход со двора), контора А. Т. К. УС — 4.

Шупашкар леспромхозне çак специальноçсене пĕлекенсем кирлĕ: бухгалтерсем, шоферсем, тимĕрçĕсем, платниксем, десятниксем тата чернорабочисем.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Чебоксары, Ул. Максима Горького, 23. Телефон. 4—58.

2—1.

Шупашкар больницине ĕçлеме ЭКОНОМ-КЛАДОВЩИК кирлĕ.

Шупашкарти кинотеатрта ĕçлеме КОНТРОЛЕР, ДВОРНИК, УБОРЩИЦА кирлĕ.

Чăваш республикинчи Заготживконторăра ĕçлеме çак специальноçсене пĕлекенсем кирлĕ: старши зоотехник, секретарь-машинистка, бухгалтер, пункт заведующийĕ.

Адрес çапла: гор. Чебоксары, Учительская, 39. Телефон 6—16 (два звонка)

СССР Госпланĕ çумĕнчи ЦСУ-н Горькири Учебнăй Комбиначĕн Шупашкарти филиалĕ çак отделенисене вĕренме илет:

1. кĕске вăхăт хушшинче БУХГАЛТЕР пулса ĕçлеме вĕрентсе кăларакан отделение. Ку отделение вăтам шкулти 9-мĕш е 10-мĕш класран вĕренсе тухнисене илеççĕ. Шут ĕçĕпе чылайччен ĕçленĕ пулсан, 7-мĕш класран вĕренсе тухнисене те илеççĕ. Отделени 3 уйăх хушшинче бухгалтер пулса ĕçлеме вĕрентсе кăларать;

2. кĕске вăхăт хушшинче промышленность тĕлĕшпе СЧЕТОВОД пулса ĕçлеме вĕрентсе кăларакан отделение. Отделение туллимар вăтам шкулти 6-мĕш е 7-мĕш класран вĕренсе тухнисене илеççĕ. Ку отделенире те 3 уйăх вĕренмелле;

3. кĕске вăхăт хушшинче КОЛХОЗРА СЧЕТОВОД пулса ĕçлеме вĕрентсе кăларакан отделение. Ку отделение туллимар вăтам шкулти 5-мĕш класран вĕренсе тухнисене илеççĕ. Кунта 2 уйăх вĕренмелле.

Вĕренессе производствăран татăлмасăр вĕренмелле. Вĕреннĕшĕн укçа тÿлемелле.

Заявленисене 1944-мĕш çулхи январĕн 1-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Вĕренме 1944-мĕш çулхи январĕн 10-мĕшĕнче пуçлаççĕ.

Адрес çапла: г. Чебоксары. Канашская, 21.

ДИРЕКЦИ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи АВТОТРАНСПОРТ УПРАВЛЕНИН АВТОТЕХСНАБНЕ çак специальноçсене пĕлекенсем васкавлă кирлĕ: старши бухгалтер, материально-технически склад заведующийĕ.

Ĕç укçи калаçса татăлнă тăрăх. Адрес çапла: гор. Чебоксары, Союзная, 4 (за Академическим театром).

2—1

ЯЛХУÇАЛĂХ БАНКĔН

Чăваш конторине конторăра хăйĕнче тата Çĕмĕрлепе Вăрнар районĕсенче ĕçлеме пунктсен уполномоченнăйĕсем тата кредитованипе финансировани тĕлĕшпе ĕçлекен инспекторсем кирлĕ.

Ассăна работниксене продуктсем рабочисен нормипе параççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Чебоксары, здание Госбанка, контора Сельхозбанка.

2—1.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 1894 Типографи №1. Управления полиграфпромышленноçĕн при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59X42 п. л. Тираж [illegible] экз.